3237

КӖНЕКЕ ХЫҪҪĂН КӖНЕКЕ




ХАЛЛАПСЕМ

# Чи хакли

ЧĂВАШГОСИЗДАТ — 1941



# ЧИ ХАКЛИ

ХАЛЛАПСЕМ

ЧӐВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар ◆ 1941

*Ку кӗнекере пичетленӗ халлапсене „Творчество народов СССР“ ятлӑ сборникрен илнӗ („Правда“ хаҫат редакцин изданийӗ).*

Редактор **Н. С. Степанов.**

НТ 6528. Подписано к печати 30/IX-41 г. Заказ № 324. Объем 0,75 п. листа. Тираж 3000 экз.

Тип. № 1 Управ. изд. и полиг. при СНК ЧАССР, г. Чебоксары, Володарского, 5.



# ЧИ ХАКЛИ

Пирĕн Карелире, Онега кӳлли çывăхĕнче, колхоз пулнă. Унта чи лайăх колхозниксем Федор-старик, Марье-колхозница тата Алексей пулнă. Федор пулăçă пулнă, Марье ачасем пăхнă, Алексей конюхра ĕçленĕ.

Пĕрре пĕтĕм колхозниксем колхоз правленине пухăннă та, çак çутă тĕнчере мĕн чи лайăххи, мĕн чи пахи çинчен калаçма тытăннă. Çыннисем вĕсем аякка тухсах çӳремен, çавăнпа та калаçасса та хăйсем пек, ялти майлă калаçнă.

— Пирĕн ĕнесем чи лайăххисем: вĕсем пире сĕт параççĕ, пире пурне те тăрантараççĕ. Эпир сĕт сăватпăр, хăйма пуçтарса çу тăватпăр, пашалу пĕçеретпĕр те ăна хăймапа сĕретпĕр, — тесе каланă хĕрарăмсем.

— Сирĕн сăмахăрсем тĕрĕс мар! Пулă нимрен те хаклă! Вăл пире тăрантарать те, ĕçĕм те парать. Эпир тетелсем лартса хăть лосось, хăть шывçи, хăт сига, хăть ряпушка пулă тытса пулă шӳрпи пĕçеретпĕр, пулă кукли пĕçеретпĕр, — тенĕ пулăçсем.

— Сирĕн сăмахăрсем тĕрĕс мар! Эпир ыраш, тырпул акатпăр, пиçсе çитсенех вара вырса пуçтаратпăр, капансем хыватпăр, капансене пăсатпăр та авăн çапатпăр, кайран вара салат хыватпăр, сăра тăватпăр. Çă-

кăрсăр никам та пурăнма пултараймасть. Пулă куклине те çăнăхсăр пĕçерейменĕн, сăра та тăваймăн, — тенĕ сухаçăсем.

Шухăшланă вара колхозниксем калаçăва татса пама: ярас, тенĕ, Федора, Марьене тата Алексее мĕнпур вырăс çĕрĕ тăрăх чи лайăххи тата чи пахи мĕн пуррине курса пĕлсе çÿреме.

Хайхи çаксем Федор, Марье тата Алексей пуçтарăннă та ăçталла çул тытасси çинчен шухăшлама пуçланă. Çавăнтах Марье асламăшĕ вилес умĕн мĕн каласа хăварнине аса илнĕ:

„Эсĕ мĕн те пулин пĕлместĕн пулсан, е çул пĕлмесен, вара манăн çăмхана ил те, çипĕн пĕр вĕçĕнчен тытса çул çине пăрах, çăмха ăçталла кусса каять, санăн çулу та çав еннеллех пулать".

Çапла вара Марье Федорпа Алексее çакна каласа панă та, вĕсем кăмака хыçĕнчен çăмхана илсе, асламăшĕ каланă пек туса, çăмха хыçĕнчен утнă.

Пынă вĕсем, пынăçемĕн тĕлĕннĕ.

Ĕлĕк шывсем урлă ашса каçса çÿренĕ вырăнсенче, çуран çÿреме те, лашапа та çÿреме май килмен вырăнсенче—юханшывсем урлă çур çухрăм тăршшĕ кĕперсем хывнă: свайсем çапнă, хăма сарнă, вĕсем çине карлăксем туса лартнă.

Ĕлĕкхи власть чухне лашапа та, çуран та иртсе çÿреме çук шурлăхсенче — лайăх, чул сарнă çулсем тăсăлса выртнă. Çак çулсем тăрăх тĕрлĕ машинăсем чупнă, Онега кÿлли хĕрринче самолет ларнă. Çуран пулсан — çуран ут, машинăпа пулсан — машина çине лар, кăмăлласан — самолетпа вĕç.

Çын пырса кĕмелле мар сĕм вăрман пулнă вырăнсенче халĕ сарлака та яп-яка çулсем хывнă, тăприне таптаса якатнă, хунарсем çакса тухнă. Кăнтăрла пыратăн — çутă. Каçхине пыратăн — çутă.

Марье, Федор тата Алексей çăмха хыççăн ним йывăрлăхсăрах пынă. Кăлтăртатса çитнĕ вара çăмха Мускава. Тăван Мускав урамĕсенче машинăсем нумай чупаççĕ. Мускавра яланах çап-çутă, ĕмĕрне те çĕрле пулманăнах туйăнать.

— Мана машинăсем килĕшрĕç. Ватă çынăн урисем



хӑвӑрт утаймаҫҫӗ, ватӑла-киле машина ҫине ларса каяс, — тенӗ Федор.

— Ҫӑмха ахальтен мар кунта ертсе килчӗ. Мускав вӑл — питӗ чаплӑ. Мускавра ӗнтӗ чи лайӑххи тата чи пахи мӗн пуррине пӗлетпӗр, — тенӗ Марье.

— Курса ҫӳрер-ха Мускава: тен, чи хакли пирӗн колхозра мар, Мускавра пулӗ, — тенӗ Алексей.

Ҫакӑнпа вара вӗсем килӗшнӗ. Вӗсем урампа пынӑ, урамсем илемлинчен тӗлӗннӗ. Кӑлтӑртатса ҫитнӗ ҫӑмха ҫурт умне. Ҫурчӗ умне: „Камӑн анаталла каймалла — килӗр“, тесе ҫырса ҫапнӑ.

Ҫӑмха ҫурта кусса кӗнӗ те, чарӑннӑ. Марье ҫӑмхана илсе кӗсъене пуҫтарса чикнӗ те вӗсем ҫӗр айӗнчи метрона кӗрсе кайнӑ.

Метрора яланах кӑнтӑрла, тӗттӗм ҫӗр вуҫех те ҫук. Вӗсем метропа ҫӳренӗ, унтан пусма картлашки ҫине тӑнӑ та, пӗр утӑм та утман, вӗсемшӗн пусма хӑех шӑвнӑ. Пусма вӗсене ҫӳле, ҫӗр ҫине, илсе хӑпартнӑ, вӗсем пусмана тав тунӑ.

Марье татах ҫӑмхана кӗсъерен кӑларса ҫиппи вӗҫӗнчен тытнӑ та ҫӗре пӑрахнӑ. Ҫӑмха кӑлтӑртатса кайнӑ. Питӗ пысӑк сад умне ертсе пынӑ. Садра музыка вылянӑ. Илемлӗ чечексем ҫеҫкеленнӗ, тӗлӗнмелле кайӑксем юрӑ шӑрантарнӑ.

Садра ваттисем те ҫамрӑккисем те ҫӳренӗ: унтах ташланӑ, унтах чуччу ярӑннӑ, йывӑҫсем ҫинче тӗрлӗ тӗслӗ хунарсем ҫуннӑ.

— Ҫакӑнта пулмалла ӗнтӗ чи лайӑххи, чи пахи, мӗншӗн тесен кунта пурте хаваслӑ, савӑнӑҫлӑ, — тенӗ Федор.

Федор ҫакна каланӑ ҫеҫ, Марьен кӗсъинчен ҫӑмха тухса ӳкнӗ те малалла кайнӑ, Марье аран ҫип вӗҫӗнчен тытса юлнӑ. Ҫӑмха хыҫҫӑн Федор, Марье тата Алексей пынӑ, ҫӑмха пӗр пысӑк хӗрлӗ ҫурт умне ҫитсе чарӑннӑ. Ҫурт умне темӗн чухлӗ халӑх пухӑннӑ!

Марье ҫӑмхана кӗсъене илсе чикнӗ те, вара вӗсем ҫурта кӗнӗ. Пӑхнӑ та — шурӑ пусма ҫинче чечексем лартса ҫитӗнтернине курах кайнӑ. Пусма тӑрӑх пынӑ чухне вӗсем пире мӗнпур тӗлӗнмелле ҫӗнтерӳсем патне илсе пынӑ ырӑ ҫынӑн пурӑнӑҫӗ ҫинчен ылттӑн саспал-

лисемпе çырса хунине курнă. Çитнĕ вĕсем чи юлашки пӳлĕме. Пӳлĕм варринче темĕн чухлĕ ялавсем çакăнса тăнине, вĕсем пурте пӳлĕм варринелле тайăлнине, вĕсенчен хĕрлĕ çутă йăлтăртатса тухнине, пӳлĕм варринче — памятник ларнине курах кайнă.

— Пире çăмха пысăк çын патне илсе килчĕ! — тесе каланă çакăнта Марье.

Вăл сăмаха каласа та пĕтереймен, çăмха кĕсъерен тухса ӳкнĕ те малалла кăлтăртатса кайнă. Марье çип вĕçĕнчен аран-аран тытса юлнă. Пынă вĕсем çăмха хыççăн, пĕр чул çурт умне çитсе чарăннă. Çăмха хапхаран кăлтăртатса кĕрсе кайнă та, шурă чул çурт патне çитсе тăнă.

Марье çăмхана кĕсъене пуçтарса чикнĕ. Çав самантрах алăксем уçăлнă та вĕсене Сталин юлташ хăй кĕтсе илнĕ. Сталин юлташ вĕсене хăйĕн пӳлĕмне ертсе кĕнĕ те, вĕсенчен пурин çинчен те ыйтса пĕлме тытăннă, вĕсем пурин çинчен те каласа панă.

Чи малтан, вĕсем Сталин юлташран мĕнле майпа лайăхрах та пуянрах пурăнăç тăвасси çинчен ыйтса пĕлнĕ. Сталин вĕсене пурне те каласа панă.

— Мĕн пур-ши чи лайăххи, чи пахи? Вăл — пирĕн пурăнăç. Пурăнăç çинчен пире ăслă çулпуçсем каласа ăнлантарман пулсан, пирĕн пурăнăç çакăн пек лайăх пулас та çукчĕ, çавăнпа та чи ăсли тата чи хакли вăл — Сталин юлташ пире каласа панă сăмахсем пулаççĕ, — тенĕ вара Марье.

Вĕсем Сталин юлташпа сывпуллашнă, Сталин вĕсене ăсатса янă та вĕсем вара Мускав урамне тухнă.

Марье çăмхана алла илесшĕн пулнă, анчах аллине кĕсъене чикнĕ те, унта çăмха пулман та. Çăмхана шырама пуçланă. Шыранă-шыранă та, Сталин патне каялла таврăннă, ун патĕнче ăçта та пулин ӳкерсе хăварман-ши тесе шыранă, çул çинче те пăхса пынă — анчах çăмхана тупайман. Халĕ ĕнтĕ çулĕ те паллă: вĕсем машина çине ларнă та вĕçтернĕ.

Çитнĕ вĕсем колхоза. Колхозниксем вĕсенчен ыйтса пĕлме пуçланă:

— Пирĕн çĕр çинче чи лайăххи тата пахи мĕн пур?

Вĕсем вара пурте пĕр харăс ответ панă:

— Пирĕн çĕр çинче чи лайăххи тата чи хакли Сталин юлташ сăмахĕ пулать, — тенĕ.

Вара вĕсем пурне те, хăйсем мĕнле, ăçта пулнине пĕтĕмпех каласа панă.

Çакăнпа пур колхозниксем те килĕшнĕ.

1937 çулхи март уйăхĕнче Карел АССР-чи Пудожски районри Семеново ял çынни Ф. А. Конашков колхозник каласа панинчен çырса илнĕ.



# КĔРЕН ЧЕЧЕК

„Отрада“ ятлă колхоз пулнă. Колхоза ертсе пыма Павел Жукова суйланă. Ĕлĕк Павел питĕ чухăн пурăннă, çапах та вăл лайăх хуçа пулнă. Павел колхоза питĕ ăста ертсе пынă. Пуянсем-кулаксем Павла курайми пулнă, ăна çав тери çиленнĕ: „Мĕнле тĕп тăвас-ши ăна?“ тесе шухăшланă.

Сасартăк колхозниксен съездне пухасси çинчен хыпар сарăлнă. Съезда кайма Павла суйланă. Кайнă вара Павел съезда. Мускава, Кремле çитнĕ. Кремльте колхозсенчен пынă çынсем нумай пулнă. Вĕсем пурте хăйсен колхозĕсенчи лайăх ĕçсем çинчен те, начаррисем çинчен те каласа пама тытăннă. Павел та калама пуçланă:

— Манăн „Отрада“ колхоз питĕ лайăх, эпĕ ĕнтĕ виçĕ çул унта пуçлăх пулса ĕçлетĕп, мана пурте итлеççĕ. Эпĕ лаша вити туянтăм, ясли тутарттартăм, пирĕн колхозниксем пурте юрласа ĕçе тухаççĕ.

Сталин юлташ Калинин çине пăхнă:

— Илтетĕн-и, Михаил Иванович, колхоза лайăх ертсе пырать тесе, ун çинчен калаççĕ, — тенĕ.

Çавăнтах Ворошилов та сăмах хушнă:

— Награда парас ăна! Хĕрлĕ Çар валли лайăх лашасем ӳстерет.

Вара Павла Ленин орденĕ пама йышăннă.

— Тӑрӑш, Павел, мӗн те пулин йывӑр пулсан, эпир сана пулӑшу парӑпӑр, — тенӗ Калинин.

Павел киле таврӑннӑ, вара ҫав пуянсем-кулаксем вӑл чи пысӑк награда илнине курнӑ та, вӑрттӑн пухӑнса каварланнӑ:

— Мӗн тумалла-ха пирӗн ӑна? Кирек епле пулсан та, тӗп тӑвасах пулать.

Ҫӗрме пуян кулаксем Кирюхӑпа Митрюха Павла сыхлама пуҫланӑ. Каҫхине Павел колхоз садне кайнӑ. Тӑшмансем ӑна инҫетрен пӑшалпа пенӗ те, пульли шӑпах орденран тивнӗ. Тӑшмансем Павла ним те пулманнине, унӑн орденне ҫеҫ лапчӑтнине курнӑ.

Павел татах тӑрӑшса ӗҫленӗ, кулаксем ӑна мӗнле тӗп тӑвасси ҫинчен ҫеҫ шухӑшланӑ.

Павел вӑрмана кайнӑ. Кулаксем те ун хыҫҫӑн йӗрлесе пынӑ. Вӑл хӑйне тӑшмансем йӗрленине сиснӗ те вӗсенчен тарма пуҫланӑ. Лешсем кун хыҫҫӑн хӑваланӑ. Хӑваласа ҫитнӗ. Вӑрманта тарӑн шӑтӑк пулнӑ. Кулаксем Павла тытнӑ та ҫыхса ҫак шӑтӑка пӑрахнӑ. Павел шӑтӑкра шӑпах виҫӗ кун выртнӑ.

Сиснӗ колхозниксем Павел ҫуккине: ниҫта та ҫук, ӑҫта кайнине те никам та пӗлмест. Пур ҫӗрте те шыранӑ, анчах ниҫта та тупайман. Пӗр колхозник вӑрманта йывӑҫ тӑррине хӑпарнӑ та пӗр шӑтӑкра ҫутӑ вӗлтӗртетнине курах кайнӑ. Иывӑҫ ҫинчен анса шӑтӑк патне пырса пӑхнӑ, шӑтӑкра Павел вырта панӑ, кӑкӑрӗ ҫинче орден йӑлтӑртатнӑ. Колхозник хӗпӗртенӗ те юлташӗсене чӗнсе илнӗ. Вӗсем Павла шӑтӑкран туртса кӑларнӑ.

— Сана кам ҫыхрӗ? — тесе ыйтнӑ.

— Митрюшкӑпа Кирюшка ҫыхрӗҫ. Мана кашкӑрсем ҫисе ярӗҫ, тесе шухӑшларӗҫ пулмалла.

Хайхи бандитсене шырама пуҫланӑ. Пӗр кун шыранӑ, тепӗр кун шыранӑ татах тепӗр кун шыранӑ. Тупайман. Лешсем пытаннӑ.

Пӗррехинче, Павел инҫетри уя тырӑ пӑхма кайнӑ. Ыраш пусси хӗррипе хавасланса утса пынӑ — ах, ырашӗ лайӑх пулнӑ-ске! Сасартӑк ыраш хушшинче такам кӑштӑртаттарнине илтнӗ. Путене пуль, тесе шухӑшланӑ. Кӗтмен ҫӗртенех ун ҫине икӗ ҫын сиксе ӳкнӗ. Па-



вел вĕсене хирĕç тăма хăтланса пăхнă та, анчах ыраш-па çыхланса ўкнĕ.

Ăна ярса тытнă та хĕнеме пуçланă, унтан çыхса пăрахнă, çăварне пăкăласа чĕрĕлех юханшыв хĕррине шăтăка чикнĕ.

Каллех юлташĕсем шырама пуçланă. Ширанă, шыранă, шăпах икĕ кун шыранă. Ăна ниçта та тупайман. Шыранă май, пĕр колхозник юханшыв хĕррипе утса пынă чух, çав тери илемлĕ чечек çитĕннине курах кайнă; çав чечеке татса илме шутланă. Колхозник пĕкĕрĕлсе чечеке аллипе сĕртĕннĕ çеç, чечекĕ ăна сасă панă:

— Ан тат мана, чавса уç ман çинчи тăпрана.

Колхозник çав тери тĕлĕнсе кайнă та: „Ку чечек мĕн калать-ха?" тесе шухăшланă.

Вăл тăпрана чавма пуçланă та çĕр айне Павла чавса чикнине курах кайнă.

Павла тупнăшăн вăл питĕ хĕпĕртенĕ, ăна колхоза илсе кайнă.

Колхоза çитнĕ те, унта Кирюхăпа Митрюха халăха пăлхатнине курнă.

— Колхоз вăл тĕрĕс пурăнăç тумалли япала мар, колхозра пурăнăç начар пулать,— тенĕ Кирюхăпа Митрюха.

Сасартăк Павел пырса кĕнĕ те:

— Шăпах çаксем ĕнтĕ, Кирюхăпа Митрюха, мана çыхрĕç те юханшыв хĕррине чĕрĕлех çĕре чикрĕç. Манăн телее, мана Сталин юлташ панă орденран ман çине чечек шăтса тухрĕ,— тесе каласа панă. Вара пĕтĕм халăх шавлама пуçланă:

— Çыхăр вĕсене!

Вĕсене хытăран та хытă çыхса лартнă. Павел вара татах пурăнăçа пурăнма тата колхоз пуянлăхне çитĕнтерме пуçланă.

1937 çулхи февраль уйăхĕнче Мускав облаçĕнчи Озерски районĕнчи Якшино ял çынни В. И. Беспаликов каласа панинчен çырса илнĕ.

1
О.Т.К.

Цена 50 коп.

САМОЕ ДОРОГОЕ
СКАЗКИ

На чувашском языке

Госиздат ЧАССР
1941